* * *

Хĕрӳ хĕвел хĕрле хĕрелсе анчĕ,
Ыраш ăшне вăшлатрĕ путене.
Çĕре хуралламашкăн тепĕр анчăк —
Сар уйăх — час хăпарĕ тӳпене.

Çатан çумне таяннă шурă хурăн
Тĕтреллĕн тĕлĕрет шăп сывлăшра.
«Тĕнче юмах пек... Туй çакна та —
пурăн!» —
Тесе чĕнетĕп эп хама ăшра.

Çăвар тулли кăранклатать çăханĕ,
Хутран-ситрен хӳхлет пĕр тăмана.
Анчах этем епле ăна ылханĕ,
Епле ăна вăл хурĕ тăшмана?

Пуриншĕн те тивлетлĕ çакă ирĕк,
Пурнасшăн пурте пĕр пекех çунать.
Илтетĕн-и, мĕскер калать ав çирĕк:
«Пĕр айăп та тăваймăп чĕрчуна».

1925

* * *

Румяно, как пиге *, спустилось солнце,
В рожь перепел юркнул из-за копны.
Без сторожа земля не остается —
Блестит над лесом желтый край луны.

Береза дремлет. Ветерок, чуть вея,
Нашептывает ей слова любви.
Торжественно внушаю сам себе я:
«Мир — это сказка... чувствуй—и живи!»

Вороны, не поладив, грают гневно,
Пугает диким голосом сова.
Но разве можно думать, что враждебно
Нам кто — иль что-нибудь из естества?

Для всех простор благословенный этот,
Все к солнечному тянется огню.
Ты слышишь ли ольхи чуть внятный лепет:
«Ни в чем и никого я не виню!»

---

* Пиге — красавица.